25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 июль 25 шăматкун 172(6107) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Çĕршыв оборонине тĕреклетессишĕн

Совет Союзĕн нумай миллионлă халăхĕсем çулталăк ытла ĕнтĕ отечественнăй аслă вăрçă туса пыраççĕ. Пирĕн ирĕклĕхпе пирĕн телее туртса илес тесе совет çĕрĕ çине вăрă-хурахла килсе кĕнĕ гитлерла бандитсене хирĕç пĕтĕм халăх çĕкленсе, хăйĕн вăйне тăшмана хирĕç кĕрешме мобилизацилерĕ. Гитлерла ирсĕрсен вăрçă планĕсем пĕтĕмĕшпех путланса ларчĕç, тĕнчери ирĕклĕхе юратакан аслă халăхсем тăшмана хирĕç пĕрлешсе пĕр коалици турĕç.

Совет халăхĕ тăшманран хăраса ӳксе çухалса каймарĕ. Вăрçă пынă вăхăтра вăл пĕтĕм хăрушлăха ăнланса илсе пĕрлĕхлĕ çар лагерĕ пулса тăчĕ. Фронт ытларах та ытларах хĕçпăшалсем, боеприпассем илсе тăчĕ, колхозлă хресченсем пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар валли ытларах та ытларах апат-çимĕç парса тăчĕç. Çаксем пурте тăшмана вăйлăн пыра-пыра çапма майсем туса пачĕç.

Пирĕн государство вăрçă вăхăтĕнче хăйĕн финанс тĕлĕшĕнчи вăй хăватне те ӳстерсе пычĕ. Ку тĕлĕшпе государствăна ĕççыннисен анлă массисем пулăшса пычĕç. Государствăн 1942 çулти военнăй заемĕ тата укçа-тенкĕпе япаласен пĕрремĕш лотерейи кĕске вăхăтрах ăнăçлăн сарăлни çакна уçăмлăн кăтартса парать.

Халĕ отечественнăй аслă вăрçăн чи хĕрӳллĕ тапхăрĕ пырать. Тăшман пĕтĕм вăйне хурса пирĕн промышленноçăн центрĕсем патнелле кĕрсе кайма хăтланать. Çĕршыв умне каллех пысăк хăрушлăх тухса тăчĕ. Çавăнпа та тăшмана тивĕçлипе отпор пама пирĕн хамăрăн вăйсене татах та ытларах мобилизацилес пулать. Лăпланса ларни халĕ нихăçанхинчен те хăрушăрах. Пирĕн хамăрăн государствăн оборона хăватне пур енĕпе те ырми-канми тĕреклетсе пырас пулать.

Çак енчен илсен, Правительство йышăннă тăрăх СССР Наркомфинĕ ирттерекен иккĕмĕш лотерея калама çук пысăк пĕлтерĕшлĕ мероприяти пулса тăрать. Укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейине çырăнас ĕç паянран пуçланать. Лотерейăна Правительство 1.500 миллион тенкĕлĕх кăларма йышăннă. Çак укçа-тенкĕн пĕр пайĕ выляв урлă лотерея илекенсене тавăрнать, тепĕр пайĕ вăрçăпа çыхăнса тăракан расходсене витме каять.

Çавăнпа та ĕнтĕ правительство укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейине кăларма йышăннине пирĕн республикăри ĕççыннисем пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Ĕнер Шупашкар хулинчи предприятисемпе учрежденисенче ĕççыннисен митингĕсем пулса иртрĕç. Рабочисемпе служащисем лотерея билечĕсене пысăк çĕкленӳпе илеççĕ, укçине те çийĕнчех парса татма тăрăшаççĕ.

Сăмахран, Шупашкарти чăлха çыхакан фабрикăра лотерея билечĕсене çырăнасси организованно пулса пырать. Гладышева юлташ уйăхне 115 тенкĕ ĕçлесе илет, лотерея билетне вăл 120 тенкĕлĕх çырăннă. Наркомфинра, ĕçлекен Ланское юлташ 140 тенкĕлĕх çырăнса укçине те тӳлесе татнă.

Çакăн пек тĕслĕхсем нумай илсе кăтартма пулать. Вĕсем акă мĕн çинчен калаççĕ: пирĕн ĕççыннисем тăван çĕршыва сыхласа хăварас тесе пĕтĕм вăйне хурса кĕрешме хатĕр, çавăнпа та вĕсем правительствăн кашни мероприятине пĕтĕм чĕререн кăмăлласа кĕтсе илеççĕ.

Паллах, укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейине пирĕн республикăри ĕççыннисем пурте хавассăн çырăнса илĕç. Анчах çакă вăл лотерея билечĕсене сарас тĕлĕшпе ĕçлемелле мар рине пĕлтермест. Лотерея ăнăçлăн сарăлтăр тесен, вырăнсенчи партипе совет, профсоюзпа комсомол организацисен чылай вăй хурса ĕçлемелле, вĕсен хăйсен çак задачине тивĕçлипех ăнланса илмелле. Лотерея ăнăçлăн сарăласси — партипе советсен вырăнти организацийĕсем массăллă ăнлантару ĕçне анлăн сарса янинчен, государствăн çак пысăк ĕçĕ çинчен кашни рабочипе колхозника тĕплĕн ăнлантарма пĕлнинчен килет.

Уйăх мăнах комсомолецсен лайăх та оперативно ĕçлемелле. Лотерея билечĕсене вырнаçтарас практикăлла ĕçе вĕсем çине хунă. Вĕсен ку ĕçе туман хăйсен пĕтĕм пултарулăхне кӳмелле.

Лотерея билечĕсене колхозниксем хушшинче вырнаçтарас ĕç çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхни кирлĕ. Колхозниксемпе колхозницăсен лотерея билетне илме анлă майсем пур. Çавăнпа та вĕсем хушшинче ăнлантару ĕçне пултаруллăн туса пырас пулать.

Укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейин билечĕсене ăнăçлăн вырнаçтарса, çĕршыв оборонине татах та ытларах тĕреклетер! Кашни рабочи, кашни колхозник тата кашни интеллигент лотерея билечĕсене илтĕр!

СССР Финанс Халăх Комиссариатĕнче

Укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейи

1942 çулти июлĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа, СССР Финанс Халăх Комиссариачĕ, ССР Союзĕн Правительстви йышăннă постановлени тăрăх, укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейине туса ирттерет.

Лотерейăн суммине 1.500 миллион тенкĕлĕх тунă. Çав сумма чухлĕ лотерея билечĕсем кăлараççĕ, кашни билечĕ 20-шер тенкĕ тăрать. Лотерея билечĕсене пĕтĕмпе 75 миллион билет кăлараççĕ, вĕсем мĕнпурĕ 75.000 сери пулаççĕ, кашни серире 1000-шер билет пулать.

Лотерея тăрăх пĕтĕмпе 1.500.000 выигрыш пулать, вĕсем мĕнпурĕ 300.000.000 тенкĕлĕх пулаççĕ, вăл шутра укçа-тенкĕ выигрышĕсем 1.450.500 выигрыш 250.100 пин тенкĕлĕх пулаççĕ тата япала выигрышĕсем 49.500 выигрыш 49.900 пин тенкĕлĕх пулаççĕ. Выигрышсен тиражĕ 1942 çулти ноябрĕн 15-мĕшĕнче пулса иртет.

Укçа-тенкĕ выигрышĕсен шутĕнче —100 выигрыш 50.000-шер тенкĕлĕх, 400 выигрыш — 25.000-шер тенкĕлĕх, 1.000 выигрыш—10.000-шер тенкĕлĕх, 5.000 выигрыш—5.000-шер тенкĕлĕх, 25.000 выигрыш—1.000-шер тенкĕлĕх 83.000 выигрыш—500-шер тенкĕлĕх тата 1.336.000 выигрыш—100-шер тенкĕлĕх.

Япала выигрышĕсенче çаксем пулаççĕ: хĕрарăмсен каракуль пальтисем 500—12.000-шер тенкĕлĕх апат çимелли кĕмĕл хатĕрсем (кашăксем, вилкăсем тата çĕçĕсем 6-шар штука) 1.000 комплект—4.200-шер тенкĕлĕх, ылттăнланă сехетсем 1.000—2.850-шар тенкĕлĕх, ковёрсем 1.000—2.500-шер тенкĕлĕх, кĕмĕл сехетсем 1.000—2.400-шер тенкĕлĕх, арçын тата хĕрарăм костюмĕсем валли çăмран тĕртсе тунă пусма тăрăхĕсем 6.000—1.550-шар тенкĕлĕх, хĕрарăм пальтисем валли каракуль воротниксем 2.000—1.200-шер тенкĕлĕх, арçын тата хĕрарăм костюмĕсем валли çăмран тĕртсе тунă пусма тăрăхĕсем 8.000—950-шар тенкĕлĕх, кĕсье сехечĕсем 2.000—825-шер тенкĕлĕх, кĕмĕл портсигарсем 2.000—800-шер тенкĕлĕх, арçын пальтисем валли каракуль воротниксем 3.000—500-шер тенкĕлĕх, каракуль çĕлĕксем 5.000—500-шер тенкĕлĕх, хĕрарăм атă-пушмакĕсем 5.000 мăшăр—360-шар тенкĕлĕх, арçын атă-пушмакĕсем 5.000 мăшăр—300-шер тенкĕлĕх, хĕрарăм кĕписем валли пурçăн тăрăхĕсем 7.000—300-шер тенкĕлĕх.

Лотерея билечĕсем тăрăх выигрышсене тираж пулса иртнĕ хыççăн тата выигрышсен таблици хаçатсенче пичетленсе тухнă хыççăн перекет кассисем çийĕнчех тӳлеççĕ. Лотерея билечĕсене вĕсем тăрăх выигрышсем илме перекет кассисене 1944 çулти январĕн 1-мĕшчен кăтартмалла.

100 тата 500 тенкĕлĕх укçа-тенкĕ выигрышĕсене перекет кассисем лотерея билечĕсене кăтартсан çийĕнчех тӳлесе татаççĕ. 1.000 тенкĕ е унтан ытларах укçа е тата япала выляса илнĕ лотерея билечĕсене, выляса илнĕ япала мĕн хак тăнине пăхмасăрах, перекет кассисем СССР Наркомфинĕн гострудсберкассăсемпе госкредитăн Главнăй управленине ярса параççĕ. Çав билет тăрăх вара выляса илнĕ лотерея билечĕшĕн укçа куçарса яраççĕ е унăн адресĕпе тивĕçлĕ япала выигрышне ярса параççĕ.

Лотерея билечĕ тытакан çын, унăн билечĕ выляса илнĕ пулсан, хăй кăмăлланă тăрăх япала выигрышĕн хакне укçан илме пултарать. Укçа-тенкĕ выигрышĕсене япала выигрышĕсемпе е пĕр япала выигрышне тепĕр япала выигрышĕпе улăштармаççĕ.

Лотерея билечĕсене тӳрех предприятире, учрежденисенче, колхозсемпе ытти организацисенче харпăрхăй ĕçленĕ вырăнта, çавăн пекех тата перекет кассисенче туянма пулать.

Предприятисемпе учрежденисенче, колхозсемпе ытти организацисенче лотерея билечĕсем сарассине государство кредичĕпе перекет кассисен ĕçне пулăшакан комиссисем туса ирттереççĕ. Вĕсем çак ĕçе туса пыма хăйсен уполномоченнăйĕсене уйăраççĕ.

Лотерея билечĕсем илме кăмăл тăвакан мĕнпур çынсене кĕртсе уполномоченнăй список тăвать, унта илекен билетсен суммине тата çав билетсемшĕн укçа тӳлесе татмалли сроксене кăтартса параççĕ. Комсод урлă илекен лотерея билечĕсемшĕн укçа çийĕнчех е темиçе срокра, анчах 1942 çулти октябрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр, тӳлесе татма пулать.

Комсодсем урлă илнĕ лотерея билечĕсемшĕн укçа-тенкĕ пухас ĕçе предприятисен, учрежденисен, колхозсен тата ытти организацисен бухгалтерĕсем çине хунă.

Июлĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа лотерея билечĕсене сарса пĕтеричченех предприятисемпе учрежденисен, колхозсемпе ытти организацисен бухгалтерĕсем лотерейăн сарăлнă билечĕсен ӳссе пыракан суммин çинчен районри (центральнăй) перекет кассине куллен пĕлтерсе тăраççĕ.

Лотерея билечĕсене вĕсемшĕн укçа пĕтĕмĕшпех тӳлесе татнă хыççăн çийĕнчех алла параççĕ. (ТАСС).

Укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейине туса ирттерес ĕçе профсоюз организацийĕсем хутшăнасси

ВЦСПС пур профсоюз организацийĕсене те рабочисем, служащисем, килхуçи хĕрарăмсем хушшинче тата ялсенче укçа-тенкĕпе япаласен лотерейин билечĕсене сарас ĕçе активлăн хутшăнма хушнă. Ĕççыннисене çакăн çинчен анлăн ăнлантарса памалла: лотерея билечĕсене сарнинчен пухăнакан укçа-тенкĕ Хĕрлĕ Çар валли çар хатĕрĕсем, боеприпассем, снаряжени туянма çĕре каять. Профсоюз организацийĕсен рабочисемпе служащисене лотерея билечĕсене илме вăтам шутпа уйăхри ĕçукçин 10 процентĕ чухлĕ çырăнтарассишĕн тăрăшмалла.

Лотерея билечĕсене ĕççыннисем хушшинче сарма профсоюз активĕнчен уполномоченнăйсем тупса палăртмалла, кашни предприятипе учрежденирех укçа-тенкĕпе япаласен пĕрремĕш лотерейин билечĕсен выигрышĕсене тĕрĕслессине организацилемелле тата çав выигрышсем çинчен кашни коллективра, районра, хулара пĕлтермелле. Предприятисемпе учрежденисенчи бухгалтерисем лотерея билечĕсене сарнинчен пухăнакан укçа-тенкĕне тĕрĕс шута илсе пынине тата çав укçа-тенкĕне вăхăтра перекет кассисене хывнине, çавăн пекех лотерея билечĕсем илекен рабочисемпе, служащисемпе расчетсем тĕрĕс тунине контроллесе тăмалла.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç ирĕклĕхшĕн пыракан аслă вăрçăпа çыхăннă мероприятисем валли укçа-тенкĕ парса тăма халăх средствисене малалла хутшăнтарас шутпа Правительство ирĕк панипе СССР Финанс Халăх Комиссариачĕ туса ирттерекен укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейин билечĕсене илме ВЦСПС мĕнпур рабочисене, служащисене тата вĕсен çемьисен членĕсене чĕнет. (ТАСС).

КАШНИ ĔÇÇЫННИ ЛОТЕРЕЯ БИЛЕТНЕ ТУЯНТĂР!

Совет государстви пирĕн Хĕрлĕ Çар, Тинĕс-Çар Флочĕ тата совет авиацийĕ валли танксем, самолетсем, тупăсем, снарядсем тата ытти хатĕрсем нумай туса хатĕрлет. Çав хĕçпăшалсене тума, пысăк çара тытса усрама укçа-тенкĕ нумай кирлĕ. Çав ĕçсем валли государство бюджетĕнчен укçа-тенкĕ каять. Çавăнпа пĕрлех хĕçпăшалсене нумайрах та нумайрах туса кăларма халăх укçа-тенкине те мобилизацилес пулать.

Рабочисем, колхозри хресченсем тата совет интеллигенцийĕ хăйсен укçа-тенкине çар расхочĕсене витме параççĕ. Государствăн 1942 çулти Военнăй заемĕ халăх хушшинче кĕске вăхăт хушшинчех сарăлчĕ, унăн укçине колхоз хресченĕсем нумайĕшĕ срокченех парса татрĕç. Пирĕн Чăваш республикинче çак заема 64 миллион тенкĕлĕх çырăннă. Ку заем унччен хи заемран 39 миллион тенкĕ ытларах сарăлнă. Укçа-тенкĕпе япаласен пĕрремĕш лотерейин билечĕсене сарас ĕç те ăнăçлăн пулса иртрĕ.

Вăрçă расхочĕсене витме халăх укçа-тенкине хутшăнтарас шутпа СССР Финанс Халăх Комиссариачĕ, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх, укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейине туса ирттерет. Çак лотерейăн билечĕсене пĕтĕмпе 1.500 миллион тенкĕлĕх кăларма йышăннă. Çак укçа-тенкĕ Хĕрлĕ Çар валли танксем, самолетсем, тупăсем тата ытти хĕçпăшалсем тăвас ĕçе каять. Укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейин условийĕсем пĕрремĕш лотерея условийĕсемпе пĕр майлах.

Çак лотерейăн билечĕсем 20-шер тенкĕлĕх пулаççĕ. Лотерейăра 1.500.000 выигрыш, вĕсем пĕтĕмпе 300 миллион тенкĕлĕх пулаççĕ, вăл шутран: — укçа выляса илмеллисем 1.450.500 выигрыш 250.100 пин тенкĕлĕх, тата япала выляса илмеллисем 49.500 выигрыш 49.900 пин тенкĕлĕх пулаççĕ.

Правительство йышăннă тăрăх, укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейин тиражĕ 1942 çулти ноябрĕн 15-мĕшĕнче пулмалла.

Лотерея билечĕсен укçине пĕр харăсах тата уйăхăн-уйăхăн тӳлесе татма пулать. Çакă вара хуларипе ялти çынсене пурне те лотерея билечĕсене туянма май парать.

Лотерея билечĕсене вырнаçтарас ĕçе анлăн сарса ярса, çак ĕçе кĕске срокрах туса иртterме тăрăшас пулать. Çак ĕçе ăнăçлăн ирттересси партин, советсен тата профсоюзсен вырăнти организацийĕсем лотерея билечĕсене сарас тĕлĕшпе массăсем хушшинче ăнлантару ĕçне мĕнле туса пынинчен, государствăн çак пысăк ĕçне тĕрĕс организациленинчен килет.

Укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейин билечĕсене ялти халăх хушшинче сарас тĕлĕшпе уйрăмах хытă ĕçлес пулать. Кашни колхозникпа колхозницăнах лотерея билечĕсене туянма май пур.

Государство кредичĕпе перекетлĕх ĕçне пулăшса пырас енĕпе предприятисенче, учрежденисенче ĕçлекен комиссисен членĕсен, финанс оргăнĕсемпе перекет кассисен работникĕсен, колхоз счетоводчĕсен, лотерея билечĕсене сарас ĕçĕн организаторĕсен пурин те укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейин билечĕсене кашни ĕççыннине туянтарма тăрăшас пулать.

Лотерея билечĕсене туянни — тăван çĕршывăн оборонине тĕреклетме пулăшни пулса тăрать. Çак шухăшпа кашни ĕççынни ăнланса илтĕр. Кашни ĕççынни лотерея билетне туянтăр!

А. МИХАЙЛОВ.

Государствăн перекет кассисемпе государство кредичĕн Чăваш АССР-чи Управлени начальникĕн заместителĕ.

Çĕртме тăвас, утă çулса пухас тата силос хывас ĕçсем республикăра мĕнле пулса пыраççĕ

Чăваш республикинчи 20 район ирхи çĕртме тăвас плана ирттерсе пурнăçларĕç. Элĕк, Канаш, Октябрьски, Первомайски, Çĕрпӳ тата Етĕрне районĕсенче ирхи çĕртмене планран ирттерсе татах 20 процент чухлĕ ӳстерсе туса хăварнă. Республика июлĕн 20-мĕш тĕлне çĕртме тăвас плана 107,2 процент тултарчĕ.

Анчах та çĕртме тăвас ĕçре кая юлса пыракан районсем те пур-ха. Вĕсем—ирхи çĕртме планне 82—88 процент çеç тултарнă Улатăр, Кувакино, Пăрачкав тата Çĕмĕрле районĕсем пулаççĕ. Çак асăннă районсен машинно-тракторнăй станцийĕсем те ирхи çĕртме планне пурнăçлаймарĕç. Тĕслĕхрен, Улатăр МТС-ĕ çĕртме тăвас плана 51,5 процент çеç, Пăрачкав МТС-ĕ—57 процент, Кувакино МТС-ĕ—61,6 процент çеç пурнăçланă. Ку районсенчи нумай колхозсен председателĕсем, ĕçе ытларах МТС туса парасси çине шанса ларнипе, çĕртме тума туртăм вăйне мобилизацилемен, çавăнпа ку ĕçе чăтма çук вăрăма чăсса пычĕç. Çĕрпӳ, Етĕрне, Шăмăршă машинно-тракторнăй станцисем те ирхи çĕртме планне çуррине ытларах çеç тултарнă.

Хăшпĕр машинно-тракторнăй станцисем çĕртме тăвас плана чылай нумай ирттерсе тултарчĕç. Элĕк МТС-ĕ ирхи çĕртме планне 80,8 процент, Ишлей МТС-ĕ 58 процент, Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕ 40 процент, Шăхасан МТС-ĕ 34 процент ирттерсе тултарнă. Ирхи çĕртме тунă çĕрте МТС-сен тракторĕсемпе сухаласа плана республикипе 102,6 процент пурнăçланă.

Улатăр, Красноармейски, Кувакино, Пăрачкав, Сĕнтĕр тата Çĕмĕрле районĕсен руководителĕсен задачи çакăнта пулать: мĕнпур пек вăя ĕçе мобилизацилесе, ирхи çĕртмене çак кунсенчех туса çитермелле.

Колхозсен тепĕр кирлĕ ĕçĕ вăл—утă çулса пухса кĕртесси. Июлĕн 20-мĕш тĕлне, ЧАССР Наркомземĕ панă сводка тăрăх, утă çулса пухас ĕçе республикăн 15 районĕнче çеç вĕçленĕ. Çаран утине 91,9 процент çулнă. Комсомольски район утă çулса пухас плана 8,9 процент ирттерсе пурнăçланă.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи колхозсенче утă çулас ĕç чăтма çук вăраха юлса пырать. Утă çулас вăхăт тахçанах иртнĕ тата курăксен пахалăхĕ кунран кун чакса пырать пулсан та, район июлĕн 20-мĕш тĕлне утă çулас ĕçе 16,1 процент çеç тунă. Красноармейски тата Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи колхозсенче те утă çулас ĕç çителĕксĕр пулса пырать.

Утăлăх акнă курăксене пухса кĕртес ĕç те республикăра çителĕклĕ пулса пымасть-ха. Пурĕ 40.295 гектар çулса пухмалла пулсан, 23.561 гектар, урăхла каласан, акнă лаптăкăн 58,5 процентне çеç çулса пухнă. Канаш, Комсомольски, Вăрмар, Шăхасан тата Елчĕк районĕсем кăна утăлăх акнă курăксене пĕтĕмĕшпех пухса кĕртнĕ. Улатăр, Элĕк, Кувакино, Сĕнтĕрвăрри, Пăрачкав, Советски тата Çĕмĕрле районĕсен çĕрĕç пайĕсем утăлăх акнă курăксене çулас ĕç районра мĕнле пынине пĕлмеççĕ. Вăрнар районĕнчи колхозсем утăлăх акнă курăксен 6,6 процентне çеç пухса кĕртнĕ. Ку ĕç Куславккапа Йĕпреç районĕсенчи колхозсенче те вăрăма тăсăлса пырать.

Утă çулнипе тата уборкăна хатĕрленнипе пĕр вăхăтрах, колхозсен силос хывас ĕçе те çине тăрса туса пымалла. Тырăсене пухса кĕртес ĕçсем пуçланиччен силос хывас плана кашни колхозăн 70 процентран кая мар тултармалла. Силос хывас ĕç чылай районсенче ăнăçлăн пулса пырать. Сăмахран, июлĕн 20-мĕш тĕлне силос хывас çулталăкри палана Çĕмĕрле районĕ 100,5 процент, Шăхасан районĕ 86,8 процент, Комсомольски район 79,6 процент, Сĕнтĕрвăрри районĕ 78 процент, Вăрмар 74,4 процент тултарнă.

Анчах çак ĕçе хăшпĕр çĕрте тивĕçлипе хакламаççĕ-ха. Элĕк районĕ июлĕн 20-мĕш тĕлне силос хывас плана 17 процент, Красноармейски район 21,5 процент, Шăмăршă районĕ 23,1 процент çеç тултарнă. Улатăр, Çĕрпӳ, Етĕрне, Сĕнтĕр тата Йĕпреç районĕсенче те силос хывас ĕç начар пулса пырать. Июлĕн 20-мĕш тĕлне пирĕн республика силос хывас плана 50,5 процент çеç пурнăçланă.

ВКП(б) райкомĕсен, райсовет исполкомĕсен, çĕрĕç пайĕсен тата колхоз председателĕсен, тырăсем пулса çитичченхи хаклă вăхăтпа туллин усă курса, çĕртме тăвас, утăсене пухса кĕрес тата силос хывас плансене пĕтĕмпех пурнăçлама колхозниксен анлă массисене мобилизацилемеле.

Комбайнсене юсас ĕç республикăра мĕнле пыни

Июлĕн 20-мĕш тĕлне пирĕн республикăри 9 машинно-тракторнăй станци (Хĕрлĕ Чутай, Вăрмар, Шупашкар, Шăхасан, Йĕпреç, Ишлей, Комсомольски, Красноармейски тата Первомайски) комбайнсене юсас ĕçе пĕтĕмĕшпех вĕçленĕ. Элĕк тата Çĕрпӳ МТС-сем ку ĕçе вĕçлес патне çитнĕ.

Тырпулсене пухса кĕрес ĕçсем пуçланиччен шутлă кунсем çеç юлнă пулин те, хăшпĕр МТС-сем комбайнсене халĕ те чăтма çук начар юсаççĕ. Республикăри 368 комбайнран 311-шĕ çеç ĕçе тухма хатĕр. Тĕслĕхрен, Улатăр МТС-ĕ комбайнсен паркĕн çуррине кăна тырпулсене пухса кĕме хатĕрлесе çитернĕ. Сĕнтĕрвăрри, Шăмăршă, Сĕнтĕр тата Пăрачкав МТС-сем комбайнсене юсас плана 62—66 процент çеç тултарнă. Ĕç çапла тăни çак районсенчи ВКП(б) райкомĕсен, райсовет исполкомĕсен тата МТС-сен руководителĕсене сахал хускатать. Вĕсем ку таранччен машинăсене хăвăртрах юсаса çитерес тĕлĕшпе пĕтĕм вăя мобилизацилемен. Çак МТС-сем июлĕн 10-мĕшпе 20-мĕш хушшинче пурĕ те 2-шер комбайн çеç юсанă, Сĕнтĕрвăрри МТС-ĕ çеç çак вăхăтра 5 комбайн юсанă.

Вăрнар, Çĕмĕрле тата Елчĕк МТС-сем иртнĕ вунăкунлăхра комбайнсене юсас ĕçĕн хăвăртлăхне чакарчĕç, вĕсем 10 кун хушшинче те пĕрер комбайн çеç юсаса кăларнă. Кувакино МТС-ĕн татах 6 комбайн юсавсăр, апла пулин те вăл иртнĕ вунăкунлăхра комбайнсене юсас ĕçе пачах чарса лартнă.

Çак çитес кунсенчех тырăсене пухса кĕрес хĕрӳ ĕçсем пуçланаççĕ. Парти организацийĕсемпе райсовет исполкомĕсен машинно-тракторнăй станцисене уборкăна хатĕрлесе çитерес ĕçе халех хутшăнмалла, çак кунсенчех пур комбайнсене те юсаса çитерме мерăсем йышăнмалла.

Шупашкар хула совечĕн сессийĕ

Июлĕн 23-мĕшĕнче ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула совечĕн черетлĕ XVI-мĕш сессийĕ пулса иртрĕ. Сесси 1941—1942 вĕренӳ çулĕн итогĕсем çинчен тата çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленесси çинчен сӳтсе яврĕ. Ку ыйту тăрăх хула совет исполкомĕн çутĕç отделĕн заведующийĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ А. Кириллова юлташ доклад туса пачĕ, хула совечĕн культурăпа йăла ĕçĕн яланлăх комиссин председателĕ А. Плетнев юлташ содоклад турĕ. Вĕсем хулари шкулсем иртнĕ вĕренӳ çулне мĕнле вĕçлени çинчен, çитес вĕренӳ çулне хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçсем мĕнле пыни çинчен каласа пачĕç.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес енĕпе шкулта вĕренме тивĕçлĕ ачасене шута илсе тухнă, вĕсене классем тăрăх вырăнаçтарса тухма план туса хатĕрленĕ. Хулари шкулсенче пĕтĕмпе 161 класс пулмалла, вĕсенче 5.336 ача вĕренмелле.

Шкул çуртĕсене юсаттарас ĕç начар пырать. 1-мĕш номерлĕ шкула çеç юсама тытăннă, ытти шкулсене юсас ĕçе тытăнман та. Строительство тресчĕпе хула коммунхозĕн ремонт контори шкулсене юсассине хăйсем çине илменни çак ĕçри пысăк чăрмав пулса тăрать. Çавăн пекех шкулсем валли вутă турттарас ĕçе тытăнманпа пĕрех. 10-мĕш номерлĕ шкул кăна хĕллe валли вутă турттарса хатĕрленĕ. 3-мĕшпе 4-мĕш номерлĕ шкулсем валли вутă турттарма тытăннă кăна-ха. Шкулсенче вĕренекенсем валли кĕнекесем çителĕклĕ мар.

Пренире А. Г. Дмитриева, П. И. Михайлова, А. Е. Васильева, К. А. Арзамасова депутатсем, 1-мĕш номерлĕ шкулăн директорĕ Сергеева, КОГИЗăн Чăваш республикинчи уйрăмĕн пуçлăхĕ Киреева, ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ Д. Федоров тата Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарĕ, хула совечĕн депутачĕ М. П. Макаров юлташсем тухса каларĕç.

Тухса калакансем иртнĕ вĕренӳ çулĕнчи çитменлĕхсене палăртрĕç, вĕсене пĕтерме кирлине кăтартса пачĕç, хальхи вăхăтра шкул ачисем ялхуçалăхĕнче тăрăшса ĕçлени çинчен, эмел курăкĕсем пухни çинчен каласа пачĕç.

Хула совечĕн сессийĕ йышăннă решени тăрăх, шкулта вĕренме тивĕçлĕ ачасене пурне те шкулсене явăçтармалла, августăн 15-мĕшĕпе 20-мĕш кунĕсем хушшинче шкул çурчĕсене тасатса тата дезинфекцилесе çитермелле, августăн 5-мĕшĕнчен пуçласа 10-мĕшчен «Шкула пулăшмалли кун» туса ирттермелле. Хула совечĕн сутуилӳ отделĕн, столовăйсен тресчĕн тата Чебторгăн шкулсенче вĕри апат çитерессине организацилемелле.

Сесси организациллĕ ыйтусене пăхса тухрĕ. Хула совечĕн культурăпа йăла ĕçĕн яланлăх комиссийĕн членĕсем пулма А. Г. Дмитриева тата Н. К. Львова депутатсене уйăрчĕ. Хула совет исполкомĕн çутĕç отделĕн заведующийĕ пулма А. Кириллова юлташа, сутуилӳ отделĕн заведующийĕ пулма П. Маркосов юлташа çирĕплетрĕ.

Тыл пулăшăвĕ

Правительство укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейин билечĕсене кăларнине Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ типографире ĕçлекенсем пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç.

Митингра пулнисем лотерея билечĕсене илме çавăнтах çырăнма пуçларĕç. Пичетлекен цехра ĕçлекен Думешсемарăмĕпе упăшки—иккĕшĕ те уйăхри ĕçукçин 20 процентĕ чухлĕ, переплетчик Алексеев юлташ, уйăхне ĕçукçи вăтамран 430 тенкĕ илекенскер, 300 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Федоров юлташ вĕсен чĕнĕвне йышăнчĕ, вăл уйăхри ĕçукçин çурри чухлĕ çыранчĕ.

Типографин пĕрремĕш сменинче ĕçлекенсем çĕнĕ лотерея билечĕсене илме малтанхи кунах—июлĕн 24-мĕшĕнчех—пурте пекех çырăнчĕç. Пĕрремĕш смена малтанхи кунах 4.120 тенкĕлĕх çырăннă. Иккĕмĕш лотерея билечĕсене сарас ĕç малалла пырать.

Т. И.

Уйăхри ĕçукçи чухлĕ

Шупашкарти чăлха фабрикинчи рабочисем, инженерла-техникла работниксем тата служащисем иккĕмĕш лотерейăн билечĕсене пĕр сехет хушшинче 6.760 тенкĕлĕх çырăнчĕç, çакă вăл вĕсен уйăхри ĕçукçи фончĕн 11 процентĕнчен иртет. Уйрăм рабочисем лотерея билетне илме уйăхри ĕçукçинчен ытларах та çырăнаççĕ. Сăмахран, чăлха çыхакан цехри Гладышева юлташ, 115 тенкĕ илекенскер, 120 тенкĕлĕх çырăнчĕ. Механически цехри мастер Тираспольский, рабочи Штейнберг юлташсем 120-шер тенкĕлĕх çырăнчĕç.

М. СМЕТАНИН.

* * *

Правительство укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейин билечĕсене кăларни çинчен радиопа пĕлтернине текстильпроект тресчĕн 3-мĕш номерлĕ бюровĕнче ĕçлекенсем пĕрле пухăнса итлерĕç. Вĕсем çавăнтах лотерея билечĕсене илме пурте пĕр çын пек çырăнчĕç. Çырăнни суммн вĕсен уйăхри ĕçукçин 17,3 процентĕ чухлĕ шутланать.

Пысăк хаваслăхпа

Финанс Халăх Комиссариатĕнче ĕçлекенсем укçа-тенкĕпе япаласен иккĕмĕш лотерейин билечĕсене пысăк хаваслăхпа çырăнса илеççĕ. Толопилло юлташ, лотерея билетне уйăхри ĕçукçин 30 процентĕ чухлĕ çырăнса, çапла каларĕ:

— [illegible]ăн упăшка фронтра нимĕç захватчикĕсене хирĕç вилĕмрен шикленмесĕр çапăçать. Эпĕ хамăн ĕçукçин пĕр пайне государствăна парса мухтавлă Хĕрлĕ Çара пулăшасшăн.

Çырăнакансенчен чылайăшĕсем лотерея укçине те çавăнтах хываççĕ. Государство дохочĕсен отделĕн начальникĕ Ланское юлташ 140 тенкĕлĕх çырăнчĕ те укçине çийĕнчех тӳлесе татрĕ. Инспектор Цалюкова юлташ 140 тенкĕлĕх çырăнса 60 тенкĕ тӳлерĕ.

Финанс Халăх Комиссариатĕнче ĕçлекенсем çĕнĕ лотерея билечĕсене пурĕ 3.180 тенкĕлĕх вырнаçтарчĕç.

В. ТАВРИН,
Комсод председателĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июлĕн 23-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Июлĕн 23-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Воронеж** районĕнче, çавăн пекех тата **Цымлянская, Новочеркасск, Ростов** районĕсенче хаяррăн çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Июлĕн 22-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 32 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 165 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 40 лавне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, полевой тата зенитнăй артиллерин 3 дивизионне пусарса лартнă, боеприпассем хупă икĕ складне сирпĕнтерсе янă, пĕр транспортне сиенленĕ, торпеднăй катерне путарнă тата противникăн пехотине икĕ ротăна çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Воронеж районĕнче çапăçусем малалла пулса пынă. Нимĕçсен фашистла войскисем, юлашки вăхăтра хавшаса çитнĕскерсем, çĕнĕ вăйсем иле-иле пыраççĕ, хăйсем йышăнса илнĕ рубежсене тытса тăрас тесе пĕтĕм вăйпа тăрăшаççĕ. Пĕр участокра противникăн йышлă танкĕсемпе пехоти пирĕн энски мотострелковăй чаçа кунĕпех атакăланă. Пирĕн боецсем нимĕçсен атакисене пурне те сирсе пăрахнă та малалла кусна. Çапăçу хирĕнче противникăн çĕмĕрĕлнĕ е çунса кайнă темиçе вунăшар танкĕсем тата унăн салтакĕсемпе офицерĕсен пине çити виллисем выртса юлнă. Тепĕр участокра старши лейтенантăн Гориловичăн подразделенийĕ гитлеровецсен виçĕ контратакине сирсе пăрахнă, çирĕплетнĕ рубежа тытса илнĕ. Нимĕçсен çĕр ытла салтакĕпе офицерĕ вилнĕ. Пирĕн бронебойщиксем нимĕçсен икĕ танкне çунтарса янă.

* * *

Цымлянская районĕнче вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Совет чаçĕсем противникăн нумай хутчен тунă атакисене сире-сире пынă. Пирĕн артиллеристсем нимĕçсен 4 танкне çунтарса янă, хăйĕн вăйĕпе çӳрекен 3 орудине, 7 пулеметне тата 300 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн танксен пĕр подразделенийĕ противникăн тылне татса кĕнĕ. Орудисене тата гусеницăсемпе таптаса, пирĕн танкистсем нимĕçсен боеприпассем тиенĕ 40 автомашинине ытла, походнăй мастерскойне пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен 150 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Новочеркасск районĕнче пирĕн войскăсем противникăн танкĕсен пысăк вăйĕсемпе мотопехотине хирĕç оборонăллă çапăçусем туса пынă. Пирĕн пĕр часть пĕр талăк хушшинче тăшманăн 7 атакине сирсе пăрахнă, нимĕçсен пин салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Тăшман çапăрса илес хăрушлăх килсе тухсан, командованин приказĕ тăрăх пирĕн боецсем çĕнĕ рубеж патне чакнă. Тепĕр участокра пирĕн бронебойщиксем нимĕçсен 8 танкне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Калинин фронтĕнче разведка тăвакан отрядсем активлăн кĕрешнĕ. Федоров юлташ командир пулса тăракан чаçри разведчиксем юханшыв урлă каçнă та, противникăн йышлăрах вăйĕсене хирĕç çапăçса, 70 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ. Разведчиксен тепĕр ушкăнĕ нимĕçсен гарнизонĕ çине хăюллăн пырса тапăннă. Хастарлă боецсем 20 гитлеровеца вĕлернĕ тата нимĕçсен темиçе салтакне тыткăна илнĕ, вара пĕр сухатусăрах хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче противникăн тылĕнче кĕрешекен П. юлташăн отрядĕнчи партизансен пĕр ушкăнĕ нимĕçсен çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Войскăсем ларса пыракан 7 пассажирски вагон тата автомашинăсем тиенĕ 7 платформа ванса кайнă. 150 гитлеровец пĕтнĕ. Çав отрядри партизансен ушкăнĕх О. ялĕнче нимĕçсен гарнизонĕ çине хăюллăн пырса тапăннă. Совет патриочĕсем 40 оккупанта вĕлернĕ, противникăн боеприпассем усракан складне сирпĕнтерсе янă тата батальонри пĕр минометне тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 88-мĕш дивизийĕнчи 346-мĕш полкран тыткăна лекнĕ унтер-офицер Карл Ш. çапла каласа панă: «Пĕр кун хушшинче пирĕн отрядра 90 çын вилчĕç е аманчĕç. Пире Н. ятлă высотана йышăнма тата ăна хамăр алăра тытса тăма хушрĕç. Эпир çав высота çине çитнĕччĕ, анчах та пирĕн тыла вырăссен танкĕсем татса кĕчĕç. Пирĕн 1-мĕш взвод çийĕнчех пĕтрĕ, 15 салтак вилчĕç е аманчĕç. Пирĕн пурнăç та çавнашкал çеç вĕçленме пултарасси пиренишĕн пуриншĕн те паллă пулса тăчĕ. Çавăн хыççăн вара штабс-фельдфебель Р. манпала тата ытти салтаксемпе канешларĕ те хĕçпăшалсене пăрахма хушрĕ. Эпир 17 çын пурте тыткăна парăнтăмăр».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем çĕнĕрен калама çук тискер ĕçсем туни çинчен пĕлтернине илнĕ. Июль пуçламăшĕнче Курскăн çар коменданчĕ хулари нумай çынна сборнăй пункта пухăнма хушнă, хăйсемпе пĕрле апат-çимĕç тата кĕреçесем илсе пыма каланă. Кăтартнă срока 400 çын ытла пухăннă. Нимĕçсем çав пухăннă çынсене укрепленисем тума хăваласа кайнă. 10 кун иртсен, çав ĕçсене туса пĕтерсен, гитлерла çынвĕлерексем вăл çынсене шăтăксем чавтарнă та строительствăра ĕçленисене пурне те персе вĕлернĕ.

* * *

Югослави партизанĕсем нимĕçсемпе итальянец захватчикĕсене хирĕç вăйлăрах та вăйлăрах кĕрешеççĕ. Партизансен отрячĕсем хăйсем тытса илнĕ чылай хуласене хăйсен аллинчен вĕçĕрмесĕр тытса тăраççĕ. Патриотсем пĕр çапăçура кăна 300 оккупанта ытла пĕтерсе тăкнă. Италипе Югослави чиккинчен инçет мар вырăнта Триестпа Любляна хушшинчи чугунçул çинчи темиçе пункта тытса илнĕ. Итали самолечĕсем Прозор хули çине питĕ нумай бомба пăрахнă, ăна пĕтĕмпех ишнĕ. Хĕрарăмсемпе ачасем нумай пĕтнĕ.

Июлĕн 24-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳрен

Июлĕн 24-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Воронеж** районĕнче, çавăн пекех тата **Цымлянская, Новочеркасск, Ростов** районĕсенче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Воронеж районĕнче çапăçусем малтанхи пекех хаяррăн пулса пыраççĕ. Противник пирĕн наступлени тăвакан войскăсене шитĕ вăйлăн хирĕç тăрать. Уйрăм рубежсем тата халăх пурăнакан пунктсем темиçе хутчен алăран алла куçаççĕ. Дон урлă каçмалли пĕр кĕпер районĕнче Носаль капитанпа Андронов капитан командир пулса ертсе пыракан подразделенисем нимĕçсемпе венгерсен йышлăрах вăйĕсене тĕл пулнă. Противник виçĕ хутчен вăйлă контратака тунă. Пирĕн боецсем çав атакăсене сирсе янă, 700 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн танкистсем нимĕçсен 9 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Новочеркасск районĕнче йывăр çапăçусем пынă. Пирĕн войскăсем противникăн йышлăрах вăйĕсен атакисене сире-сире янă. Нимĕçсен пĕр анчĕр участокра кăна 17 танк тата 800 çын ытла пĕтнĕ. Пирĕн авиаци активлăн кĕрешет, вăл противникăн çапăçу йĕркисене тата унăн çыхăнăвĕсене тăтăшах пыра-пыра çапать.

* * *

Цымлянская районĕнче пирĕн часть нимĕçсен танкĕсемпе автоматчикĕсен икĕ атакине сирсе янă. Мала тата флангсене тухса тăнă бронебойщиксем нимĕçсен 3 танкне çунтарса янă, 6 танкне персе çĕмĕрнĕ. Пирĕн боецсем пăшалсемпе пулеметсенчен тĕл персе тата штык вĕççĕн çапăçса, нимĕç автоматчикĕсене 400 çынна ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче икĕ кун хушшинчи çапăçусенче противникăн 800 салтакĕпе офицерĕ ытла вилнĕ е аманнă. Пирĕн артиллеристсем минометсем противникăн икĕ орудине, 10 пулеметне тата 2 минометне пĕтерсе тăкнă. 16 дзота, темиçе блиндажпа землянкăна тата наблюдательнăй пунктсене çĕмĕрнĕ. Темиçе çынна тыткăна илнĕ тата трофейăсем тытса илнĕ. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе, нимĕçсен 4 самолетне ӳкернĕ.

* * *

Белоруссире кĕрешекен партизансен К., Л. тата Д. юлташсем командир пулса ертсе пынипе пĕрлешнĕ отрячĕсем пĕр нимĕç генералне, 8 офицера тата 27 салтака пĕтерсе тăкнă. Совет патриочĕсем çар грузĕ тиенĕ 11 автомашинăна сирпĕнтерсе янă тата трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Нимĕç салтакĕсем хăйсен тăван çĕршывне янă çырăвĕсенче совет партизанĕсенчен хăраса çыраççĕ. Партизансен тытма çук отрячĕсем нимĕçсене пысăк çухатусем тӳстереççĕ, тесе çыраççĕ салтаксем. Шидер ефрейтор Франц Геблер патне çапла тарăхса çырать: «...Эпир ĕнтĕ темиçе эрне хушши тылра партизансене хирĕç кĕрешетпĕр. Ылханлă вăрçă. Пур енче те тăшмансем». Гесльбауэр ефрейтор фрау К. Гесльбауэр патне çапла çырать: «...Кашни кунах лавсем, машинăсем сывлăшла сирпĕнеççĕ. Пур çĕрте те пире кураймаççĕ. Кунта пире мĕнле хăрушлăх кĕтсе тăни çинчен каласа пама та хĕн».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Орел облаçĕн оккупациленĕ районĕсенчи халăхсене пĕтерсе пыраççĕ. Павловски тата Голышкино поселокĕсенче гитлеровецсем пурăнмалли мĕнпур çуртсене тата пур хуралтăсене çунтарса пĕтернĕ, çĕмĕрсе тухнă. Нимĕçсем 175 çынна—хĕрарăмсемпе ачасене тата старикесене—асаплантарса, персе вĕлернĕ.

* * *

Узбекистанри колхозниксем государствăна çĕнĕ тырă параççĕ. Республикăри нумай колхозсем хăйсен государство умĕнчи обязательствине тултарнă та ĕнтĕ. Андижански область государствăна тырă парса пĕтернĕ. Плана тултарнă колхозсем Хĕрлĕ Çарăн тырă фондне тĕпĕтырă хываççĕ.

Стаффорд Криппс Совет Союзĕ çинчен

Мускава Лондонри «Дейли мейл» хаçатăн 1942 çулти мартăн 7-мĕшĕнче тухнă номерĕ килнĕ. Унта Британи çар кабинечĕн членĕ, Великобританин ССР Союзĕнчи посолĕ пулнă сэр Стаффорд Криппс Америкăри «Лайф» журнала панă интервьюн çакăн пек текстне пичетленнĕ:

«Манран «Лайф» журнал валли статья çырса пама ыйтсан, — тесе çырать Криппс, — эпĕ, паллах, редактор манран Россия пирки пĕтĕмĕшлĕн те тĕтреллĕн каласа панисĕр пуçне тата мĕн ыйтни çинчен пĕлесшĕн пултăм.

Çакăн хыççăн вара редактор ман патăма чылай ыйтусем ярса пачĕ. Унăн шухăшĕпе, çав ыйтусем вулакансене интереслентереççĕ, вĕсем çине вăл манран ответ илесшĕн. Эпĕ çав ĕçе тăвасшăн та ĕнтĕ. Ыйтусене тĕрĕс мар лартнă пулсан, ку вара манăн айăп мар. Анчах та ман ответсем ĕçе тĕпĕ-йĕрĕпех çутатса параймаççĕ пулсан, çакăншăн вара эпĕ пĕтĕмĕшпех ответ тытатăп.

1. Сталин хăй вăрçă çине мĕнле пăхать?

Российйăн Хĕвеланăçĕнчи тата Хĕвелтухăçĕнчи хăйĕн кӳршисен агрессине хирĕç кĕрешме лекессине Сталин нумай вăхăт хушши пĕлсе, кĕтсе тăнă, вăл вара темиçе çул хушши Совет Союзĕн оборонине хатĕрлесе пынă.

Вăл стратеги тĕлĕшĕнчен вăйлă чикĕсем кирлине ăнланса тăнă пулин те, хăйĕн унăн нихăçан та агрессиллĕ ĕмĕтсем пулман. Вăл хăйĕн тăван çĕршывне мирлĕн малалла аталантарса пыма ăна лăпкăлăхра хăварĕç тесе шанса тăнă.

Вăрçă пуçлансан Сталинăн хăйĕн çĕршывĕнчи положенийĕ нумай ытларах çирĕпленчĕ, вăл хăй, ун çинчен нумай çынсем шухăшланă пекех, пысăк çын пулса тăнине кăтартса пачĕ.

2. Вăрçа Сталин хăй ертсе пырать-и?

Чи кирлĕ те чи пысăк решенисене пурне те вăл йышăнать. Унăн пултаруллă помощникĕсем нумай пулсан та, йышăннă решенисемшĕн пуриншĕн те тĕп ответлăха вăл тытать.

3. Нимĕçсем малалла куçса пынă май вырăссем хăйсен промышленноçне Хĕвелтухăçнелле куçарни вырăссен çитĕнĕвĕсене татса паракан тĕп фактор пулса тăрать-и?

Çак ыйтăвăн икĕ ен пур—хăрушлăх умĕнче тăракан районсенчен промышленноçа Хĕвелтухăçнелле куçарни вырăссемшĕн лайăх, нимĕçсемшĕн вара лайăх мар.

Чи малтан, промышленноçа Хĕвелтухăçнелле куçарни вăл противника мĕн усă кӳме пултарать, çавсене пурне те пĕтерессе çинчен калакан политикăн пĕр пайĕ пулса тăрать. Анчах та çакă паллă: çав мероприятие ăна промышленноçăн пĕр пайне вырăссемшĕн сыхласа хăварас шутпа тунă, унсăрăн çав промышленность çухалнă пулĕччĕ.

Ку мероприятие ик тĕлĕшрен те ăнăçлăн туса иртернĕ, çакă вăл вара вырăссене ăнăçу тума пулăшакан питех те паха япала пулса тăнă.

4. Россия хăш енĕпе вăрçă пуçланичченхинчен вăйлăрах пулса тăчĕ тата хăш енĕпе унтан вăйсăртарах пулчĕ?

Российйăн пĕртен-пĕр ӳснĕ вăйсăрлăхĕ—çынсемпе территори тĕлĕшĕнчен тӳснĕ çухатупа таччăн çыхăнса тăрать.

Фронтра тӳснĕ çухатусене пула тата граждăнла çынсен чылай пысăк йышне, тепĕр чухне, пĕтĕм тĕнчери мĕнпур килĕшӳсене пăссах вĕсене тыткăна лекнĕ çар çыннисем вырăнне хурса, Германие илсе кайнине пула Российйăн халĕ çынсен ресурсĕсем чакрĕç. Анлă районсем халĕ те нимĕç оккупанчĕсен аллинчех тăнине пула, Российйăн продовольстви тумалли тата чĕртавар тупмалли майсем чакрĕç.

Тепĕр енчен, Российйăра вăрçă пуçланнăранпа пысăк çитĕнӳсем тунă. Вĕрентсе хатĕрленĕ тата туллин хĕçпăшалланă салтаксен шучĕ халĕ чылай ӳснĕ, предприятисем продукци туса кăларасси, çавăн пекех тата сăрт-ту промышленноçĕ кирлĕ япаласем тупса кăларасси те тата оккупацилемен районсенчи хресчен хуçалăхĕсен ĕç тухăçлăхĕ те питех те вăйлăн ӳснĕ.

Вăрçă вăрçмалли çĕнĕ орудисем шухăшласа кăларнă, самолетсемпе танксен конструкцийĕсене лайăхлатнă. Анчах пуринчен малтан вырăссем хăйсен йывăр опытне тӳссе иртнĕ нимĕçсен моторизациленĕ вăйĕсене хирĕç кĕрешмелли меслетсене вĕренсе çитрĕç. Вырăс халăхĕ—унăн машинăсемпе çынсем сахалтарах пулнă чухне те çиçĕмле вăрçăн тактикине сире-сире пăрахма пултарнине кăтартса панă пĕрремĕш халăх пулса тăрать. Çакă вăл 2.000 мильăллă фронтра пĕр хутчен кăна мар пулса иртнĕ.

5. Россия, оборона туса пынă пекех, ăнăçлă наступлени тума пултарать-и?

Чылай тĕлĕшрен çакă вăл тума тытăнакан наступленилле ĕçсен характерĕнчен килме тивĕçлĕ. Российйăри коммуникацисем Германиринчен начартарах аталаннă, çавăнпа та вырăссене хăйсен войскисене хăвăрттăн пухса тăратма тата вĕсене вырăнтан вырăна куçарма çăмăллах мар лекет.

6. Эсир хăвăр вырăссен çарĕсем кăçалхи июнь уйăхĕ тĕлне вăрçă пуçланиччен-хинчен икĕ хут вăйлăрах пулĕç тесе каланине ăнлантарса пама пултараймăр-ши?

Кунăн сăлтавĕ вăл çакăнта пулать—Россия çине унăн ăнчченхи тусĕ кĕтмен çĕртен ултавлăн пырса тапăнчĕ. Российйăн хăйĕн çынсем тĕлĕшĕнчи çавтери пысăк ресурсĕсене малтанах мобилизацилесе тăратма кирлĕ те пулман тата çавна тума вăхăчĕ те пулман.

Россия пек çавтери анлă çĕршывра пĕтĕмĕшлĕ мобилизаци туса иртерме тата кирлĕ снаряженисене пурне те, уйрăмах хаяр çапăçусем пынă чухне тата анлă фронтра тăтăшах каялла чакса пынă чухне, пухса тăратма вăхăт нумай кирлĕ. Çапах та вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах вырăссем мобилизацие пĕр пăркаланмасăр туса пычĕç. Çĕнĕрен тунă малтанхи армисене çапăçăва кĕртни кĕрешӳ шăпине Германие хирĕçле тайăлтарчĕ те ĕнтĕ. Халĕ ĕнтĕ çав армисем уйăхран уйăхах строя кĕрсе пырĕç, сухатусем пулнă пулин те, вĕсем малти линие çителĕклĕ таранах войскăсем ларса тăратĕç.

Ман шутпа, июль уйăхĕ тĕлне Российйăн, сахалтан та, вăрçă пуçланиччен-хинчен икĕ хут ытларах салтаксем пулĕç.

7. Вырăссен командирсен должноçĕсене çамрăк офицерсене уйăрса лартас политики пирки эсир мĕн шухăшлатăр?

Çак политика вăл совет çыннисен уçăмлă реализмĕн пайĕнчен пĕри пулса тăрать. Вырăссем вăрçăра çĕнтерес тесе кĕрешеççĕ, çакна тума мĕн пулăшать, вĕсем çавăнпа пуринпе те усă кураççĕ.

Çынсем хăйсен ĕçне туса пыма пултараймаççĕ пулсан, вĕсене çав ĕçрен сиреççĕ те вĕсен вырăнне урăххисем йышăнаççĕ. Совет правительстви хăйĕн офицерĕсене чылай çулсем хушши çар шкулĕсенче вĕрентсе пычĕ, халĕ ĕнтĕ çав çамрăксем вĕсене вĕрентес тĕлĕшпе вăй хурса ĕçленине тӳрре кăларчĕç.

8. Россия хăйĕн çарĕсене Европăна мĕн тери инçете яма шутлать?

Сталинăн планĕ — нацистсене пĕтĕмĕшпех тата таткăланах çапса аркатасси. Çак задачăна пурнăçа кĕртмешкĕн мĕн чухлĕ шала кĕмелле, вырăссен çарĕсем Европăна çавăн чухлĕ шала кĕрĕç.

Çавăнпа та паллах ĕнтĕ, Германие пуçĕпех çапса аркатиччен, килĕшӳ тăвас тесе е ытти мĕнле те пулин сăлтава пула, вырăссем çурмаçул çинче чарăнасси çинчен сăмах та пулма пултараймасть.

Эпĕ тĕп тĕллев Берлин пулĕ тесе шутлатăп, мĕншĕн тесен вăл Германи агрессийĕпе ун вăйĕсен центрĕ пулса тăрать. Ниçта та мар çавăнта ĕнтĕ тĕнĕл держависене çапса аркатĕç.

9. Вырăссем нимĕçсене Англипе Америкăн енчен пулăшу илмесĕрех çапса аркатма шутламаççĕ-и?

Эпĕ çапла шутлатăп: вырăссем, вĕсен вăрçа пĕтерес тесе пĕччен тăрса кĕрешме лекес пулсан та, нимĕçсене пурĕ-пĕрех çапса аркатассине Совет правительстви шанса тăрать.

Иккĕленмелли çук, вырăссем çакна ăна пирĕн пулăшусăр тума шутламаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем хăйсен кĕрешĕвĕнче вĕсене союзниксем пулăшассине пĕлеççĕ.

Англин танкĕсемпе самолечĕсем нимĕçсене хирĕç пыракан çапăçусенче вырăссен çĕрĕ çинче, халлĕхе нумаях мар пулин те, хăйсен ĕçне турĕç.

Анчах та кунта çав ыйтăвăн тепĕр енĕ пур, вăл ĕнтĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Эпĕ çапла шутлатăп: Совет правительстви унăн союзникĕсен войскисем Германие совет войскисемпе пĕрлех кĕрессине тата вĕсем Германи çарĕсене аркатса тăкнă çĕре, Германи территорине оккупациленĕ çĕре хутшăнассине ĕмĕтленет.

Çакă вăл — ăслă шухăш, пирĕн çав саманта — пирĕнтен нумайĕшĕсем шутланинчен чылай хăвăртрах килсе çитме пултаракан саманта кĕтсе илме хатĕрленмелле.

10. Россия хăйне валли яланлăхах мĕнле территориллĕ чикĕсем тума палăртнă?

Ку ыйтупа манăн питех те асăрханса калаçма лекет тата хам пултарнă таран чăнлăх патне чи çывăх пыракан шухăша каласа пама тăрăшмалла.

Совет правительстви чăннипе мĕнле требованисем лартни çинчен калакан нимĕнле сведенисене те шута илсе каламастăп эпĕ.

Иртнĕ вăрçă тата вырăссен революцийĕ пулса иртнĕ хыççăн çĕнтернĕ державăсем большевикла правительствăна пĕтерсе тăкма тата вырăссен «шурă» правительствине влаçа тавăрма хăтланса пăхрĕç. Çавăн чухне Российйăн территорийĕ чылаях каталчĕ.

Патша правительстви аллинче хăрушă мар тесе шутланă территорисене патша правительствин противникĕн аллинче хăварма ун чухне хăрушă тесе шут турĕç.

Финляндия хăй тĕллĕн пурăнакан çĕршыв пулса тăчĕ. Балтика тавраш-енчи государствăсенчен никама пăхăнман виçĕ пысăк мар çĕршыв—Эстония, Латвия тата Литва пулса тăчĕ. Королевство туса хунă Польша Российйăна хирĕç кĕрешсе, Россия шутĕнчен хăйĕн чиккисене сарчĕ, Бессарабия Румыни аллине куçрĕ.

Çав мĕнпур улшăнусем Совет Союзĕн пысăкĕшне чакарчĕç кăна мар, вĕсем тӳрременĕх Совет Союзне стратеги тĕлĕшĕнчен вăйсăрлатас шутпа тунă улшăнусем пулчĕç.

Большевизмран хăрани Совет Российйин вăй-хăватне чакарас тĕлĕшпе туса иртернĕ практикăллă мероприятисен формине йышăнчĕ.

Кайрантарах, халĕ пулса пыракан пĕтĕм тĕнчери вăрçăн малтанхи тапхăрĕнче, Совет правительстви Хĕвеланăçĕнчи хăйĕн чиккисене Германие хирĕç стратеги тĕлĕшĕнчен çирĕплетме тăрăшрĕ. Пулас мир енĕпе пăхсан, çавна ăна саламламалла кăна, çавна ăна Германия пырса тапăниччен туса иртернĕ; чикĕсене çавăн пек сарни ĕнтĕ вăл Совет правительствине кайран Мускавпа Ленинград пек питех те кирлĕ пурнăç центрĕсене сухатмасăр каялла чакма май пачĕ.

Ленинграда хӳтĕлеме вырăссем Фински заливпа Балтика тинĕсне контроллесе тăни питех те кирлĕ. Çавăн пекех тата çакă та кирлĕ: совет промышленноçĕн пурнăç центрĕсем çывăхĕнче тăшманла державăсем ун çине тапăнса кĕрес ĕçре усă курма пултаракан вак государствăсем пулмалла мар.

Ку ĕнтĕ вăл çакна пĕлтерет: стратеги тĕлĕшĕнчен кирлĕ положени шута илсе, Совет правительстви Германия пырса тапăнассинчен хăй хӳтĕленĕ чикĕсене (1941 çулти июнĕ уйăхĕнче пулнă чикĕсене) ыйтма тивĕçлĕ.

Кунта çак тĕлĕшпе кăна ĕç урăхларах пулма пултарать. Российйăпа Германи хушшинче вăрçă пуçланнă чухне, Совет Союзĕпе Польша чикки, паллах, вăхăтлăха тунă чикĕ пулнă, ăна таткăланах палăртса хурассине,—эпĕ çакăн çинчен хавасланса калатăп,—халĕ туслă государствăсем пулса тăнă икĕ государство—Польшăпа ССР Союзĕ татса парĕç.

Совет правительстви, эпĕ çакна ĕненетĕп, территорисем туянас енĕпе çакăнтан ытла нимĕн те тума шутламасть.

11. Россия вăрçă тата мир тĕлĕшпе мĕнле тĕллевсем лартать?

Территори тĕлĕшпе лартакан тĕллевсем пирки эпĕ ĕнтĕ хамăн шухăша каласа патăм. Российйăн вăрçă тĕлĕшĕнчи тĕллевĕсем вара Англипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем вăрçă тĕлĕшпе лартакан тĕллевсемпе пĕр пекех, çак тĕллев вăл—агрессие таткăланах пĕтерсе тăкасси тата тĕнчене 20 çул иртнĕ хыççăн килсе тухакан событисенчен хăтарасси пулса тăрать.

Российйăн мир тĕлĕшĕнчи тĕллевĕ—Европăпа тĕнчене çакăн пек никĕс çинче—Совет правительствине хăйĕн çĕршывне мирлĕ условисенче малалла аталантарса пыма май паракан никĕс çинче урăхлатса йĕркелесси пулса тăрать.

Çавна май вырăссем халь пулса иртекен вăрçăри тискерлĕхсемшĕн ответлисене тивĕçлĕ наказани пама кирлĕ тесе шутлаççĕ, цивилизаци çавнашкал тискерлĕхсене тӳссе тăма пултарманнине пĕтĕм тĕнчене кăтартса пама кирлĕ тесе шутлаççĕ.

Эпĕ çапла шухăшлатăп: вырăссем вăрçă хыççăнхи мире мĕнле йĕркелеме шутлани çинчен çак сăмахсемпе каласа пама пулать: ССР Союзĕ пĕтĕм тĕнчери мире вăйлă державăсем—Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем, ССР Союзĕ, Великобритания тытса пымалла тăвасшăн тăрăшать. Вырăссем пулас тĕнчене питех те тĕрĕс пăхса хаклаççĕ, вĕсем пĕр-пĕр либераллă идеализм тĕнчере лăпкă пурнăç туса парать тесе шутламаççĕ; вăрçă сĕрĕмне сирмешкĕн нумай çулсем кирлĕ пулаççĕ, унта пĕтĕмĕшлĕн хĕçпăшалсăрланнă тенĕ пек ĕçсем валли вырăн та пулма пултараймасть, тесе шутлаççĕ.

12. Вырăссем хăйсем оккупацилеенĕ территорисем çинче коммунизм йĕрки тăвĕç-и?

Çак ыйтура вырăссем хăйсен аллинче хăварас шутпа мар, вăхăтлăха оккупациленĕ территорисем çинчен каланă пулсан, çак ыйту çине ответ хирĕçле пулма пултарать. Вырăссем хăйсемшĕн хăрушсăрлăх туса хурас ĕмĕтпе оккупацилеме кирлĕ тесе шутлакан территорисем пурте Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн составне союз рамкинчи автономлă республикăсем пулса кĕреççĕ.

13. Вырăссем Германишĕн мĕнле экономикăллă система палăртса хураççĕ?

Совет правительстви яланах Германи халăхĕпе нацистсем хушшинче уйрăмлăх пуррине палăртать. Совет правительстви нацистсене тата вĕсен мĕнпур ĕçĕсене пĕтерсе тăкассишĕн çавтери çирĕппĕн тăрать, анчах та вăл нимĕçсем малашне хăйсен çĕршывĕн рамкинчен тухмасăр пурăнма килĕшсен, нимĕçсене пĕтерсе тăкма е нимĕçсен шалти пурнăçне хутшăнма шутламасть. Нимĕçсем Гитлера тата унăн агрессисем туса пынă çĕрте, ют территорисене тытса илнĕ çĕрте витĕнмелли май кăна пулса тăракан национал-социализмне сирсе пăрахаççĕ пулсан, вырăссем нимĕçсене нимĕнле урăхла экономикăллă системăна та пăхăнтарма тăрăшмĕç.

14. Пĕтĕм тĕнчери революци тăвас идейăна вырăссем халĕ мĕн таран тытса пыраççĕ?

Экономикăллă системăра тарăн улшăнусем пулса иртеççĕ пулсан, паллах, вырăссем, ытти нумай çынсем пекех, çав улшăнусем революциллĕ майсемпе пулса иртессине кĕтме пултараççĕ. Анчах та ку вăл вырăссем ытти çĕршывсенче революци пуçлас шутпа хăйсен политикăллă влиянийĕпе усă курма пăхассине пачах та пĕлтермест. Фактсем пачах та урăххи çинчен калаççĕ.

Çакăн çинчен эпĕ пĕтĕмпех шантарса калама пултаратăп, мĕншĕн тесен манăн çакăн çинчен Сталин хăй каланă тата вырăссем ытти государствăсен шалти ĕçне хутшăнасшăн мар тесе Совет правительстви темиçе хутчен те уççăн каласа панă. Вĕсем çак принцип çинче —хăв пурăн тата ыттисене те пурăнма пар, текен принцип çинче никĕсленсе тăракан политикăна пурнăçа кĕртме пыма тăрăшаççĕ. Вĕсем хăйсен системин çитĕнĕвĕсемпе усă курса, çав система паха пулса тăни çинчен тата ăна йышăнни вырăнлă пулни çинчен ыттисене ĕнентерме тăрăшаççĕ.

Эпĕ çак ыйтăва уйрăмăнах палăртаслăн, мĕншĕн тесен Гитлерпа унăн агенчĕсем, хăйсен противникĕсем хушшинчи союза вăйсăрлатас шутпа, Европăна «большевиклатаççĕ» тесе хăратнипе яланах усă курма пăхаççĕ.

15. Сталин Англипе Америкăна тĕпĕ йĕрĕпех пĕлет-и?

Ку ыйту çине ответлеме питех те йывăр, мĕншĕн тесен эпĕ çапла шутлатăп: эпĕ Англипе Америка çинчен пĕлни, тен, хăшпĕр американецсемпе англичансем пĕлнинчен пачах уйăрăлса тăрать!

Ман шухăшпа, Черчилльпе Рузвельт президент, нацистсене çĕнтерес тесе, хăйсем мĕн тума пултарнине пĕтĕмпех тума хатĕр тăнине Сталин шанать. Эпир пулăшу парассишĕн тăнине вăл пĕлет, анчах эпир çак енĕпе мĕн чухлĕ малалла кайма хатĕр тăнине, тен, вăл ĕненсех çитереймест пулĕ. Çавăн пекех вăл вăрçă пĕтнĕ хыççăн, Европăна реорганизацилес ĕç пуçланнă хыççăн эпир Россия çине мĕнле пăхасси пирки те пĕтĕмĕшпе ĕненсех çитереймест.

Цивилизацин пуласлăхĕшĕн пирĕн виçĕ çĕршыв хушшинчи çыхăнусене вăраха хăвармасăр питĕ çине тăрса палăртма кирлĕ тесе шутлатăп эпĕ.

16. Вăрçă вырăссен шухăшĕсене улăштарнă-и?

Кунта вырăссем хăйсен çĕршывне организацилемелли чи лайăх форма тĕлĕшпе тытакан шухăшсене пăрахасси çинчен ыйту тăрать пулсан, çак ыйту пирки, паллах, ответ хирĕçле пулать. Тĕрĕссипе вăрçă çакна кăтартса пачĕ: Европăра пĕртен-пĕр халăх—Гитлерăн çиçĕмле вăрçă тактикине сирсе яма пултарнă халăх—вырăс халăхĕ пулса тăрать.

17. Россия ăна хирĕç пĕтĕм тĕнче çĕкленнĕ тесе халĕ те шутлать-и?

Совет правительствин иртнĕ вăхăтри позицийĕ ытти çĕршывсем СССР тĕлĕшпе хăйсене мĕнле тыткаланинчен туса тăнă.

Ют çĕршывсем тăшманла пăхни,—çакăн пек пăхасси вăл «большевизмран» хăрани çинче никĕсленсе тăнă, —Российйăна тĕрĕссипех: вăл тăшманла йĕри-тавралăхра пĕр-пĕччен тăрать, тесе шухăшлаттарнă.

Малашлăх мĕнле пуласси халĕ уçăмлах курăнмасть-ха, чăн та, вырăссем вăрçă хыççăн тĕнчене урăхлатса йĕркелес ĕçре пирĕнпе пĕрле ĕçлеме тăрăшаççĕ пулсан та, вĕсем халлĕхе пирĕн икĕ çĕршыв çак ыйту тĕлĕшпе мĕнле позици тытнине ĕненсех çитереймеççĕ-ха.

18. Германия поражени тӳснĕ хыççăн ССР Союзне хирĕç тăма пултаракан союзниксен коалицийĕнчен советсен çулпуçĕсем шикленеççĕ-и?

ССР Союзĕнче çак тĕлĕшпе мĕнле те пулин шикленесси пурри çинчен шухăшлани ӳстерсе шухăшлани пулнă пулĕччĕ, анчах та çакна ăнланса илме кирлĕ: Российйăн тулашри çыхăнăвĕсен иртнĕ вăхăтри историйĕ хăвăртах манăçа юлма пултараймасть. Çавăнпа та ĕнтĕ, Совет правительстви, эпĕ кун çинчен маларах каланă пекех, вăрçă пĕтнĕ хыççăн чăн-чăн лару-тăру мĕнле пуласси çинчен пĕлме тăрăшать.

19. Мĕншĕн вырăссем союзниксене тата уйрăмах вăрçă тĕлĕшпе сăнакансене хăйсен çывăхне ямаççĕ?

Çак ыйтăва ăна ытлашши палăртса çивĕччĕн лартнă. Пĕр-пĕрипе таччăн çыхăнса ĕçлеменни çакă вăл халиччен çапла пулнă пулсан, малашлăх пирки шансах çитерейменнин пĕр пайĕ кăна пулса тăрать.

Çапах та туслă çыхăнусем хăвăрттăн аталанса пыраççĕ: эпĕ ĕненетĕп, пирĕн халăхсем пĕр-пĕрин çине чи ырă туйăмпа пăхаççĕ.

20. Мирлĕ конференцире Россия мĕнле партнер пулĕ?

Çакă вăл эпир пĕр-пĕрне мĕн чухлĕ çирĕп ăнланса илнинчен, Совет Союзĕпе мĕн чухлĕ килĕштерсе туслăн ĕçлениниченр, эпир мирлĕ конференцин çавра сĕтелĕ умĕнче мĕнле тĕл пуласинчен килет.

Пĕтĕм тĕнчен пуласлăхĕ, е сахалтан та пирĕн ăрăвăн пуласлăхĕ, мирлĕ конференцире йышăннă решенисенчен килет.

Çакна пула ĕнтĕ мĕнпур тĕп ыйтусене вăрçă хыççăн мирлĕ пурнăçа сыхласа усрас ĕçпе ыттисенчен ытларах интересленекен çĕршывсем хушшинче —Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем, ССР Союзĕ, Великобритани тата Китай хушшинче малтанах сӳтсе-явни кирлĕ».

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 6—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропогандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1319 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.